27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
24
ЭРНЕКУН
231(6726) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕнче

1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх ирттересси çинчен

Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана тата 1944 çулхи бюджета пур тупăшсем енĕпе те пĕтĕмпех тата лайăх пурнăçлани халăх хуçалăхĕшĕн питĕ кирлĕ ĕç пулса тăнине шута илсе, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1944 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕпе декабрĕн 25-мĕшĕ хушшинче 1944 çулхи финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх ирттермелле.

Финанс Халăх Комиссариатне, ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсене, ĕççынин депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен исполком председателĕсене, халăх хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса пырса, финанс органĕсен, ялсовечĕсен, колхоз правленийĕсен ĕçне татăклă вăх лайăхлатса, уйăхлăх вăхăтĕнче 1944 çулхи финанс планне тултарса çитерме тата бюджетăн ытти мĕнпур тупăшĕсен планне пурнăçа кĕртме хушнă.

Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен уйăхлăха ăнăçлăн ирттерес ĕçе организацилеме районри партипе совет активĕн ретĕнчен ялсовечĕсемпе колхозсене ответлă уполномоченнăйсем ямалла.

Республикăра тухакан «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçатсене тата районсемпе хуласенчи хаçатсене 1944 çулхи финанс планне пурнăçа кĕртсе çитерессишĕн пыракан уйăхлăх мĕнле пыни çинчен тăтăшах çутатса тăма хушнă.

Финанс планне срокра тултарса пымалла

Пирĕн çулпуç Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладра тылри ĕççыннисен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. «Хĕрлĕ Çар Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пултарчĕ пулсан тата нимĕçсене совет çĕрĕ çинчен хăвалаcа кăларчĕ пулсан, — тенĕ Сталин юлташ,—çакна вăл пирĕн пĕтĕм çĕршыври мĕнпур халăхсем тылран пĕтĕм вăя хурса пулăшса тăнипе турĕ. Мĕнпур совет çыннисен—рабочисен, хресченсен, интеллигенцин вăя хĕрхенмесĕр туса пынă ĕçĕ, çавăн пекех тата пирĕн государствăпа парти органĕсен ертсе пырас ĕçĕ те иртнĕ çулталăкра «Йăлтах фронт валли» текен ялав айĕнче пулса пычĕ».

Совет ĕççыннисем фронтшăн, çĕнтерӳшĕн нимĕн те шеллемеççĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисем хăйсем перекетленĕ укçана нумай миллион тенкĕ государство заемĕсене, укçапа ялпаласен лотерейин билечĕсене туянна çĕре пачĕç, Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники тума çĕршер пин тенкĕ хыврĕç. Пирĕн ĕççыннисем нумайĕшĕ хăйсен укçа-тенкĕ парăмне срокчен тата чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Октябрьски районри ĕççыннисем укçа-тенкĕ пухмалли виççĕмĕш квартăлти плана 163 процент тултарнă, тăваттăмĕш квартăлти плана тултарасси те унта ăнăçлăн пырать. Ку районра партипе совет организацийĕсем, ялти актив укçа-тенкĕ пухас ыйтупа кулленех интересленеççĕ, вĕсем çав ĕçре хăйсем пример кăтартса пыраççĕ.

Пирĕн республикăри районсен укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарма условисемпе майсем çителĕклĕ таранах пур. Анчах та чылай районсем çав майсемпе тивĕçлипе усă курмаççĕ-ха. Чăваш АССР Верховный Совечĕн 1-мĕш созыври VIII-мĕш Сессийĕ 1944 çулхи бюджета çителĕксĕр пурнăçа кĕртнине палăртрĕ.

Виççĕмĕш квартăлти укçа-тенкĕ пухмалли плана, налогсемпе страховка укçине, заем укçине тата тĕрлĕ вкладсене кĕртсе шутласан, 72 процент çеç тултарнă.

Финанс планне тултарасси çавăн пек юлса пыни, чи малтанах, райсовет исполкомĕсем финанс органĕсен ĕçне кирлĕ пек тĕрĕслесе тăманнинчен тата вĕсене куллен ĕçре пулăшманнинчен килет.

Финанс агенчĕсемпе инспекторĕсем хушшинче ĕç дисциплини çӳрĕкленни те укçа-тенкĕ пухас ĕçе чылай чăрмавсем кӳрет. Çакăншăн районсенчи финанс пайĕсем тата Финанс Халăх Комиссариачĕ ответлă пулса тăраççĕ. Вĕсем ĕç дисциплинине çирĕплетес, финанс работникĕсене хăйсен ĕçне чыслăн пурнăçа кĕртме мобилизацилес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ уйăх çурă хушшинче те тăваттăмĕш квартăлти плана 27 процент çеç тултарнă. Мĕншĕн тесен унта партипе совет организацийĕсем, районри финанс пайĕ укçа-тенкĕ обязательствисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслес ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен, налог инспекторĕсемпе агенчĕсем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тăрăшмаççĕ.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарманни учительсене, врачсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тата ытти работниксене ĕçукçи парас ĕçе чăрмавсем кӳрет, халăх хуçалăхĕпе культура строительствине укçа-тенкĕ вăхăтра парса тăма чăрмантарать. Çавăнпа та партипе совет организацийĕсен, финанс работникĕсен хальхи тапхăрта фронтпа çĕршывшăн питех те кирлĕ ĕçе — укçа-тенкĕ пухмалли плана чыслăн пурнăçласа пымалла.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана ялăнах вăхăтра тата пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас тесен, республикăри мĕнпур финанс работникĕсен вăйне пур тӳлевсем енĕпе те укçа-тенкĕ пухса çитерес задачăна пурнăçа кĕртес ĕçе мобилизацилемелле. Пуринчен малтан, финанс работникĕсене ĕç дисциплинине пăхăнма, хăйсен государство умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыма хушмалла. Райсовет исполкомĕсем тата партипе комсомол организацийĕсем финанс ĕçне хакламаннине тĕпренех пĕтермелле. Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тата ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси — оборонăллă ĕç. Çĕршывпа фронта укçа-тенкĕ те хĕçпăшалсемпе тырпул пекех кирлĕ. Çакăн çинчен пĕр минутăлăха та манма юрамасть.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, ноябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 25-мĕшне çити вăхăтра укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарса çитермелли уйăхлăх иртет. Çак тапхăрта пирĕн укçа-тенкĕ пухас енĕпе юлса пырассине пĕтерсе, финанс планне ăнăçлăн тултармалла тăвас пулать. Çакна пурнăçа кĕртме партипе совет организацийĕсен, финанс работникĕсен халăх хушшинче ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса пымалла. Укçа-тенкĕ парăмĕсене парса татасси государствăшăн хальхи тапхăрта питех те кирлĕ ĕç пулса тăни, укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра татасси çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕç пулни çинчен ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарассишĕн кĕрешме пĕтĕм актива мобилизацилемелле.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар хăйĕн юлашки задачине татса парасси умĕнче тăрать. Нимĕç захватчикĕсене хăйсен шăтăкĕнчех тĕпĕ йĕрĕпе аркатса тăкас задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçре государство умĕнчи финанс обязательствисене пурнăçа кĕртесси те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртни çĕнтерĕвĕн çутă та телейлĕ кунне çывхартма пулăшать.

И. В. Сталин И. Шубашич господинпа калаçни

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Югослави Премьер-Министрне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне И. Шубашич господина йышăннă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Эд. Кардель господин тата Югославин Совет Союзĕнчи Посолĕ С. Симич господин пулнă.

Арми генералне Г. Ф. Захарова Суворов орденĕпе Хĕрлĕ Ялав орденĕ пани

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник юлташ арми генералне Г. Ф. Захарова 1-мĕш степень Суворов орденĕ панă. Ана çак орденпа нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн наградăланă.

Ана Хĕрлĕ Çарта срокран юлса нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă.

ЯЛТИ ХАЛĂХА — КИВÇЕН УКÇА

Кăçал, пĕтĕм совет çĕрне нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă май, ялти халăха иртнĕ çулхисенчен чылай ытларах кивçен укçа памалла тунă. Пĕлтĕрхинчен икĕ хут çурă ытларах панă та ĕнтĕ. Ял хуçалăх банкĕ панă ссудăсен 95 процентне колхозниксем, агрономсем, учительсем, врачсем илнĕ. Çав кивçен паракан укçана пуринчен ытла çуртсем тума е юсама тата выльăх-чĕрлĕх туянма илеççĕ. (ТАСС).

ЯЛСЕНЧИ ÇАМРАКСЕМ ВАЛЛИ НАУКА ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ЛЕКЦИСЕМ ВУЛАÇÇĔ

Курск облаçĕнче ялсенчи çамрăксем валли наука ыйтăвĕсемпе лекцисем вулаççĕ. Вĕсене шкулсенчи преподавательсемпе наука работникĕсем вулаççĕ.

Çак кунсенче Обояньре çĕр çинче пурнăç мĕнле пуçланса кайни çинчен лекци вуласа панă. Ана Курскри врачсен квалификацине хăпартакан институт директорĕ Староверов юлташ вуласа панă. Лекци питĕ лайăх иртнĕ. Ясеновски районри Болоцкое ялĕнче Колтакова учительница наука ыйтăвĕсемпе яланах лекцисем вулать.

Çавăн пек лекцисем Курск облаçĕнчи Черемисиновски, Волоконовски тата ытти районсенче те пулаççĕ. (ТАСС)

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): Совет Союзĕн Икĕ хут Геройĕ Гварди капитанĕ И. Д. Гулаев, Совет Союзĕн Виçĕ хут Геройĕ гварди полковникĕ А. И. Покрышкин, Совет Союзĕн Икĕ хут Геройĕ гварди капитанĕ Г. А. Речкалов тата Совет Союзĕн Геройĕ гварди старши лейтенанчĕ А. И. Труд. Вĕсем тăшманăн 200 самолетне персе ӳкернĕ.
Г. ШИРОКОВ фото ӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Отто Вильгельмович Куусинен юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Совет государствишĕн калама çук пахаі ĕçсем тунăшăн тата нумай çул хушши обществăпа публицистика ĕçĕсене туса тăнăшăн Отто Вильгельмович Куусинен юлташа Ленин орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Кăкăр çине çакса çӳремелли „Отличнăй пожарник" ятлă паллă тăвасси çинчен

НКВД-ăн пушар хуралĕнчи уйрăмах палăрнă рядовойсемпе сержантсене хавхалантармашкăн СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. НКВД-ăн пушар хуралĕнчи рядовойсемпе сержантсем валли кăкăр çине çакса çӳремелли «Отличнăй пожарник» ятлă паллă тăвас.
2. Кăкăр çине çакса çӳремелли «Отличнăй пожарник» паллă çинчен калакан положение çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕ.

В. М. Молотов патĕнче Югослави Премьер-Министрĕ И. Шубашич господин ячĕпе ирхи апатлану пулса иртнĕ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Югослави Премьер-Министрне тата Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрне Иван Шубашич господина хисеплесе ирхи апатлану туса ирттернĕ.

Апатланура çаксем пулнă: И. Шубашич господин, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Эд. Кардель господин, Югославин Совет Союзĕнчи Посолĕ С. Симич господин, Югославин Совет Союзĕнчи Çар Миссийĕн начальникĕ В. Терзич генерал-лейтенант, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕн Лондонри представителĕ В. Велебит генерал-майор тата ыттисем те.

Совет Союзĕ енчен апатланура çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем—В. Г. Декановзовпа И. М. Майский, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин, И. И. Ильичев генерал-лейтенант, А. Н. Мельников генерал-майор, СССР Наркоминделĕн Протокол отделен Заведующийĕн ĕçĕсене туса пыракан Г. И. Фомин.

Апатлану вăхăтĕнче В. М. Молотовпа Шубашич господин пĕр-пĕрне саламласа сăмахсем каланă.

И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнине уявлани

ССР Союзĕн Пысăк театрĕнчи чаплă лару

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче ССР Союзĕн Пысăк театрĕнче И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнине палăртма тунă Пĕтĕм Союзри Комитетăн чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Вырăссен аслă баснописецне асăнса хисеплеме столицăри общественноçăн йышлă представителĕсем — Мускаври предприятисенче ĕçлекен стахановецсем, писательсем, ученăйсем, артистсем, Хĕрлĕ Çар генералĕсемпе офицерĕсем пухăннă. Залра дипломатиллĕ корпус представителĕсем те пулнă.

Чаплă ларăва Демьян Бедный уçнă.

Вăл вырăссен аслă баснописецĕ çинчен доклад тума Н. С. Тихонова сăмах панă.

— Крылов, — тет Тихонов юлташ, — поэт çеç мар, унтан анлăрах. Вăл просветитель тата халăх ăслăлăхĕпе пурăнакан философ, вăл тата драматург. Ахальтен мар Белинский унăн басниcем драма пек пулнине кăтартса панă. Ахальтен мар Гоголь ун çинчен çапла каланă: «Унăн юптарăвĕсем — халăх пуянлăхĕ, халăхăн хăйĕн ăслăлăх кĕнеки пулса тăраççĕ», тенĕ. Ахальтен мар Пушкин Крылов баснисенче пирĕн халăхăн çак пахалăхне «асăн савăнăçлă чеелĕхне, кулса тăрăхланине тата илемлĕн калаçма юратнине» курнă.

Докладчик çакна палăртса парать: Крылов сăмахĕсем пирĕн кулленхи пурнăçра, хаçат-журналсенче, халăх сăмахĕнче пурăнаççĕ. Владимир Ильич Ленин сăмах тухса каланă чухне Крыловăн юптарса каланă питĕ усă сăмахĕсемпе усă курнă. Аслă Сталин та Крылов сăнлăхĕсемпе усă курать.

Малалла Н. Тихонов вырăссен аслă баснописецĕн пурнăçĕпе творчестви çинчен калать.

Крылов сатири Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăчĕ.

Вăкăрпа танлашма хăтланнă шапа, хăмпă пек хăпарса çурăлса кайнăскер, мăнкăмăллă, хăйне ытлашши шанакан, сăмăл çĕнтерӳсене пула мухтанса хăмпă пек хăпарнă фашизм евĕрлĕ мар-и вара? Паян Гитлерăн ниçталлисĕр стратегийĕ Тришкин сăхманĕ пек, саплаcа пĕтернĕ, Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсем çĕнтерӳллĕн хĕссе пынине пула хĕвелтухăçĕнче те, хĕвеланăçĕнче те çурăла-çурăла каякан сăхман пек мар-и вара?

Гитлеровецсем, хăйсем пĕтсе ларас кун çывхарса килнине сиссе, урăхла курăнма, хăйсен тирне улăштарма, пĕрлешнĕ нацисен сыхлăхне улталама хăтланаççĕ. Анчах та кунта улталама çук,—тет докладчик, çак сăмахсене пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупса ырлать. — Фашистла çĕлене те Крылов баснинче тунă пекех тăвĕç. Унта çĕлен хресчене хăй ӳкĕннине, çĕнĕ тир туяннине, киввине пĕтерсе тăкнине ĕненме ӳкĕтленĕ. Анчах ăна «Санăн тирӳ çĕнĕ пулсан та, чĕрӳ санăн киввиех, тенĕ те персе вĕлернĕ».

Н. Тихонов юлашкинчен çапла калать:

— Пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă халăх баснописецĕн юбилейне тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес умĕн, хура гитлеризм пĕтсе ларас умĕн, пирĕн аслă халăх историллĕ чаплă ĕçсем тунă кунсенче палăртса, эпир вырăссен тĕлĕнмелле талантне çав тери хисеплесе юрататпăр. Вăл халăха питĕ юратнă, унăн пулас пурнăçне хытă ĕненнĕ, уншăн хĕрӳллĕн ĕçленĕ!

Докладчикăн юлашки сăмахĕсене залри çынсем нумайччен алă çупса йышăнаççĕ.

Поэт Исаковский вырăссен аслă баснописецне асăнса çырнă хăйĕн сăввисене вуласа парать. Поэт Лебедев-Кумач сăвăланă сăмах тухса калать, ăна çынсем ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Поэт Сурков вырăссен аслă баснописецĕ çинчен хĕрӳллĕ сăмах калать тата унăн ячĕпе çырнă сăвăсем вуласа парать.

Юлашкинчен пысăк концерт пулнă. Концерта Мускаври чи лайăх артистсем хутшăннă. (ТАСС).

Государство умĕнче парăмлă пулмастпăр

СЕНТЕРВĂРРИ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Чермĕшри «Пищевик» колхоз членĕсем Сталин юлташ докладне бригадăн пухăнса вĕренеççĕ. Унсăр пуçне, çулпуç доклачĕпе паллашас май, çак кунсенче колхозра ушкăнлă пуху пулса иртрĕ. Колхозниксем доклада пысăк интереспа итлерĕç, тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Вĕсем декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене сортласа пĕтерме, ялхуçалăх машинисене юсама, декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 1945 çулшăн государствăна аванс шучĕпе аш-какай тата ытти продуктсем пама пулчĕç.

М. ЯДРОВ,
колхоз председателĕ.

Вăрлăх фончĕ хывса çитертĕмĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Чамыш» колхоз кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, çитес çуракине тимлĕн хатĕрленме пуçăнчĕ. Паянхи кун тĕлне вăрлăх фондне пĕтĕмпех хывса çитернĕ. Тулă 20 центнер, сĕлĕ 80 центнер, пăрça 15 центнер, пăри 10 центнер, çĕрулми 100 центнер хывнă. Вăрлăхсене пĕр хут сортласа тасатнă. Вĕсене уйрăм амбарсенче сыхласа усратпăр.

Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве анлăн сарса пыратпăр. Халĕ ялхуçалăх машинисене юсама тата вырăнти удобренисем хатĕрлеме тытăнтăмăр.

А. ПАВЛОВ,
колхоз председателĕ.

Мускавра çĕнĕ студи уçнă

Вырăссен халăх юррисене юрлакан Пятницкий ячĕпе тăракан государство хорĕ çумĕнче студи уçаççĕ. Вăл Совет Союзĕнче çавăн йышши пĕрремĕш шкул пулса тăрать. Студире виçĕ отделени пулать: хор отделенийĕ, музыка отделенийĕ тата хореографи отделенийĕ. Студире икĕ çул вĕренмелле. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕ çинче пирĕн çарсем, артиллери хăватлăн персе хатĕрленнĕ хыççăн, çав утравăн кăнтăр вĕçĕнчи ансăр пайĕнче тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, наступление малалла вăйлатса пырса, тăшманпа хытă çапăçнă хыççăн РАХУСТЕ, КАЙМРИ, НИСУМА, ИНДУ, КАУНИСПЯ, ЛЫОПЫЛЛУ, ВИНТРИ, ИНГЕЛАНДИ, ХЕЙНАМА, КАРГИ, КОЛТСИ, ЯМАЯ, ОХЕСАРА, МЯССА, МОЙЗА, ТОРКЕН, СОДЕВАХЕ, ЯРВЕ, КАВИ ялĕсене туртса илнĕ. Çапла вара, ноябрĕн 21-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕн кăнтăр вĕçĕнче тăшман аллинче пĕчĕк плацдарм кăна тăрса юлнă, унăн анлăшĕ мĕн пурĕ те 7 километра яхăн кăна, вăл плацдарм çинче пирĕн артиллери снарячĕсем çитсе тивмен вырăн пачах та çук.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравĕн кăнтăр вĕçĕ патĕнче тăшман карапĕсене пырса çапнă. Нимĕçсен 2 миноносецĕпе хуралта çӳрекен 2 карапне шыва путарнă, 3 тральщикне, хуралта çӳрекен карапне тата хăвăрт çӳрекен десант баржине сиенленĕ.

Венгрире пирĕн çарсем ФЕЛДЕДРЕ, ВЕРПЕЛЕТ, МАЙКА, КИШ НАНА, АБАШАР ялĕсене тата ВЕРПЕЛЕТ чугун çул станцине туртса илнĕ.

Венгри çĕрĕнче ноябрĕн 14-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 4.220 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çапла вара, Венгри çĕрĕнче ноябрĕн 8-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 11.920 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 28 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

НОЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире тăшманпа çапăçса ЕГЕРСОЛАТ, ДЬЕНДЬЕШОРОСИ, ДЬЕНДЬЕШТАРЬЯН, ПОШПЕКИ, НАДЬ-РЕДЕ, ХЕВИЗ ДЬЕРК ялĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 43 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Эгер хулинчен 6 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Егерсолат ялне туртса илнĕ. Тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 9 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тыткăна лекнисем çапла пĕлтернĕ: юлашки çапăçусенче венгерсен чикĕри 9-мĕш дивизийĕнчен 60 проценчĕ ытла тыткăна лекнĕ е вилсе пĕтнĕ. Дьендьеш хули районĕнче совет çарĕсем тăшман оборонин тĕреклетнĕ темиçе пунктне туртса илнĕ. 13 тупăпа миномет, темиçе автомашина тата çар пурлăх обозне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардеецсем тăшманăн 12 контратакине сирсе янă, Хевиз Дьерк ялне йышăннă. Хатван хулипе Будапешт хули хушшинчи шоссе çулне персе тăраççĕ. Кунти çапăçура совет чаçĕсем нимĕçсемпе венгерсен 600 салтакне çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 23 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 туппине тата 7 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн çарсем тĕрлĕ участоксенче нимĕçсемпе венгерсен 1.050 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем çапăçса разведка тунă. Артиллери вăйлăн персе тăрса пулăшнипе, совет боецĕсем тăшман тăнă вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă. Çапăçура алă вĕççĕн тытăçа-тытăçа илнĕ. Совет боецĕсем нимĕçсен позицийĕсене туртса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ, вăл шутра—пĕр танк, 10 тупă, 2 боеприпас склачĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пĕр участокра тăшман пехоти пирĕн позицисене разведка туса пĕлме хăтланнă. Совет подразделенийĕсем нимĕçсене хăйсем патне çывхарса çитме панă та пулеметсемпе тата автоматсемпе вăйлăн пеме тытăннă. Гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳнĕ, вара нимĕçсем ним йĕркесĕр каялла чакнă. Пирĕн снайперсем кун каçиччен 49 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Совет летчикĕсем Хĕвелтухăç Пруссири чугун çул станцийĕсене тапăннă. Икĕ чугун çул эшелонне çĕмĕрнĕ тата тăшманăн 40 автомашинине яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра икĕ енчен те разведчиксем шыраса çӳренĕ. Пĕр участокра нимĕçсен пехоти пирĕн Харченков офицер командир пулса ертсе пыракан боевой охранине атакăланă. Совет боецĕсем, автоматсемпе персе тата гранатăсемпе вăркăнтарса, хăйсенчен нумай йышлă тăшман вăйĕсене сирсе янă. Пирĕн позицисем патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 30 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пĕр чаçри разведчиксем нимĕçсем тăнă вырăна хĕсĕнсе кĕрсе кайнă та икĕ блиндажа сирпĕнтерсе янă. Темиçе нимĕçе тыткăна илсе, разведчиксем хăйсен чаçне аванах таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем Рига заливĕнче тăшман тральщикне путарнă.

* * *

Нимĕçсен 252-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 252-мĕш сапернăй батальонăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ лейтенант Ганс Рехлинг çапла каласа кăтартнă: «Вырăс çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссие кĕрсе кайни нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене хăратса, тĕлĕнтерсе янă. Эпир пулма пултараймасть тесе шутланă ĕç—пире пуринчен те ытларах хăратакан ĕç пулса тăчĕ. Офицерсем Германи çарĕ тата мĕн чухлĕ вăхăт хушши тытăнса тăма пултарасси çинчен сӳтсе-яваççĕ. Тĕрлĕрен калаççĕ. Анчах та нумайĕшĕ катастрофа чи çывăх вăхăтрах пулма пултарать тесе шутлаççĕ».

Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 21-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен куçнă обер-лейтенант Роберт Вольф çапла каласа кăтартнă: «Вăрçă пуçламĕшĕнче эпĕ Германи çĕнтерессине хытă шаннăччĕ. Германи çарĕсем йывăр поражениссем тӳсни мана хăратрĕ, анчах та эпĕ çав поражениссем вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхсем кăна пуль тесе шутларăм. Юлашки уйăхсем хушшинче пулса иртнĕ вăрçă тата политика мана Германи пĕтсе ларассине татăклăнах ĕнентерчĕç. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсен уйрăм дивизийĕсем е çарĕсем кăна мар, пĕтĕм Германи «хурана» кĕрсе ӳкрĕ, унтан çăлăнса тухма нимле май та çук».

Нимĕçсен 296-мĕш охраннăй батальонĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ командир обер-лейтенант Ганс Тамайн çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ Германие хирĕç тăракансен лагерĕнче хирĕçӳ тухса кайĕ тесе хамăр хам нумайччен йăпатса пурăнтăм. Сăмахран каласан, офицерсен хăшпĕр ушкăнĕсенче халĕ те çав шанчăка тытса тăраççĕ. Халĕ маншăн çакă татăкланах паллă пулса тăчĕ: пирĕн çав юлашки шанчăк та пĕтсе ларчĕ. Эпир Совет Союзĕпе унăн союзникĕсем хушшинче хирĕçӳ тухса кайĕ тесе шанни вырăнлă пулмарĕ».

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

ПАРТОРГАНИЗАЦИ КОЛХОЗ ӖҪНЕ ВӐЙЛАТМА ПУЛӐШРӖ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Чуракассинчи «Правда» колхоз ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ. Колхозниксем кӑҫал государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарнӑ, пӗтӗм тырпулсене 20 кун хушшинче ҫапса пӗтернӗ.

Ӗҫри хӑвӑртлӑхсем, чи малтанах, парторганизаци колхозниксен ӗҫне тӗрӗс организацилениччен, колхозри бригадирсем: коммунист А. Николаев, В. Романов, коммунист С. Иванов юлташсем колхозниксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх туса пынипчен килнӗ. Андрей Николаев—Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ, вӑл бригадӑри пӗтӗм ӗҫе тӗрӗс йӗркелесе пырать. Унӑн бригади 115 гектар ҫинчи тырра ытти бригадӑсенчен виҫӗ кун малтан ҫапса пӗтернӗ. Килес ҫул ҫуртырисем акмалли вырӑна 32.65 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. Ҫӗртме сухинче шкул ачисем Николай Кириллов, Александр Григорьев пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑ. Вӗсем 32.65 гектара 7—8 кун хушшинче сухаласа пӗтернӗ.

Авӑн ҫапнӑ ҫӗрте ӗҫленӗ Татьяна Афанасьева, Иустиния Максимова, Федосия Макарова, Раиса Григорьева тата ытти колхозницӑсем те лайӑх ӗҫленӗ. Пӗрремӗш бригада кӑҫал 134 центнер ҫӗрулми, кашни гектар пуҫне 110 пӑт вика тата сӗлӗ начар мар туса илнӗ.

Колхозри иккӗмӗш бригада та тырпул туса илес енӗпе лайӑх ӗҫленӗ.

Гектартан сӗлӗ 14 центнер, пӑрҫа 10 центнер, вика 19 центнер тухнӑ.

«Правда» колхоз колхозникӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсенчен юлмаҫҫӗ. Уйхирте тӑрӑшса ӗҫлени, кашни гектартан тырӑ ытларах туса илни фронт ҫитнине тивӗҫтерни пулса тӑнине вӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ.

Колхозра бригада кая юлма пуҫланине е унта ӗҫсем ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхсемпе пулса пынине пӗлсенех, парторганизацинчи коммунистсем бригадӑри ӗҫсем ҫинчен пухура сӳтсе-яваҫҫӗ. Ҫуртырисем вырнӑ чухне колхозри виҫҫӗмӗш бригада кая юлнӑ. Машинӑсем начар ӗҫленӗ, колхозниксем ӗҫе ир тухман. Ҫакӑн ҫинчен парторганизаци пухӑвӗнче уйрӑм ыйту лартса сӳтсе-явнӑ. Ку бригадӑна пулӑшас ӗҫе парторганизаци секретарӗ Герасимов юлташ хӑй ҫине илнӗ. Ӗҫсем часах юсаннӑ. Бригада тырӑсене 4-мӗш бригадӑран маларах вырса пӗтернӗ.

Украина колхозникӗсем Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнсе каланине коммунистсем колхозниксем патне вӑхӑтра ҫитернӗ. Октябрь уявне ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме обязательство илнӗ. Ана часах пурнӑҫланӑ. Колхоз 419 гектар тыррине сентябрӗн 25-мӗшӗнче ҫапса пӗтернӗ, 105 гектар вырӑнне 110 гектар кӗрхи ҫӗртме туса хӑварнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх витисене тӗплӗн юсанӑ. Государство комиссийӗ выльӑх витисене хӗле хатӗрленине лайӑх тесе хак панӑ. Выльӑх-чӗрлӗхсен йышӗ планпа палӑртнӑ чухлех пур.

Колхоз 1944 ҫулхи пӗтӗм парӑмсене парса татрӗ, Октябрь уявне ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе уявласа ирттерчӗ.

С. ШАДИН.

Парти шкулӗнче вӗренме тытӑнчӗҫ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. ВКП(б) райкомӗ пуҫарнипе ҫак кунсенче район центрӗнче парти шкулне организациленӗ. Халӗ икӗ заняти пулса иртнӗ. Малтанхи занятисенче Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ , Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ историллӗ доклада вӗренме тытӑнчӗҫ.

(«Октябрь ялавӗ»).

Ҫӗнӗ вите туса пӗтерчӗҫ

СЕНТЕРВАРРИ. Шуршӑл ялсоветӗнчи «Ҫӗнӗ ял» колхоз 30 лаша вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите туса пӗтерчӗ. Ҫитес кунсенчех сурӑхсемпе сысна ӗҫем валли ҫӗнӗ вите туса ҫитереҫҫӗ. **И. ОСИПОВ.**



Красноармейски районри «Четай» колхозӑн шыв вӑйӗпе ӗҫлекен электростанцие туни ҫулталӑк ҫитрӗ. Ҫав станцие, тӗпрен илсен, хӗрарӑмсен вӑйӗпе тунӑ.

Ӳкерчӗк ҫинче: «Четай» колхозӑн гидроэлектростанцийӗ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Пирӗн ҫитӗнӳсем

Муркаш районӗнчи «Красное Сормово» колхоз членӗсем кӑҫал вӑйлӑ тырпулӑшӑн тата пысӑк тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗхшӗн чӑн та вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек ӗҫлерӗҫ. Тырпул ҫапса пуҫтарас, государствӑна тырӑ парса татас ӗҫсене эпир Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 27 ҫул тултарнӑ чаплӑ кун тӗлне пӗтӗмӗшпех вӗҫлерӗмӗр. Планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 1.154 пӑт тырӑ патӑмӑр.

Тырпул пирӗн лайӑх пулчӗ. Уйрӑмах вӑрлӑх участокӗсем ҫинче эпир вӑйлӑ тырӑ туса илтӗмӗр. Ҫурхи тулӑ кашни гектартан 120 пӑт, 10 гектар ҫинчи вӑрлӑх участокӗнчен гектар пуҫне 25-шер центнер сӗлӗ илнӗ.

Пӗтӗмӗшпе пирӗн вӑтам шутпа кашни гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ тухрӗ. Ҫапла вара кӑҫал эпир вӑрҫӑччен-хи ҫулсенчен ытларах тырӑ пухса илтӗмӗр. Ҫакӑ вӑл пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленинчен килчӗ.

Халӗ колхозра вӑрлӑхлӑх уйӑрнӑ тырӑсене сортласа тасатас ӗҫ пуҫланчӗ. Ку ӗҫе кӗске вӑхӑтрах вӗҫлесе, мӗнпур вӑрлӑхсене кладовщик аллине акт ҫырсах паратпӑр.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пирӗн колхоз яланах ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пынӑ. Кӑҫал та эпир пур выльӑхсем енӗпе те плана ытлашшипех тултарнӑ. Нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсене пулӑшас шутпа, кӑҫал эпир государствӑна планран ирттерсе 8 пуҫ ӗне, 18 пуҫ сурӑх, 8 сысна тата 2 лаша патӑмӑр.

Вӑрҫӑччен-хипе танлаштарсан, выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫӗ те чылаях ӳсрӗ. Кӑҫал эпир ҫак вӑхӑт тӗлне кашни ӗнерен 1.200 литр сӗт илнӗ, кашни ӑмаран 12,5 сысна ҫури ҫитӗнтернӗ, кашни сурӑхран 2,6 килограмм ҫӑм каснӑ. Витесемпе ферма ҫуртйӗрӗсене пӗтӗмпех ӑшӑ каймалла мар туса, лайӑх юсанӑ. Фермӑра ӗҫлекенсен ӗҫне ҫӑмӑллатас тесе, чылай паха мероприятисем пурнӑҫа кӗртрӗмӗр. Ене витинче тунӑ ӗҫсене уйрӑмах палӑртмалла. Витене рельсӑсем сарнӑ та тислӗке вагонеткӑпа кӑларатпӑр, ӗнесем валли кирлӗ апата та вагонеткӑпа илсе кӗретпӗр. Унсӑр пуҫне, ӗнесене яланах ӑшӑ шывпа шӑвармалла пултӑр тесе, кашни пӳлӗмех ӗне умне чугунран тунӑ пысӑк чашӑксем лартнӑ. Ҫав чашӑксене тимӗр трубасемпе витере пысӑк каткапа пӗрлештернӗ. Ӗнен ӗҫес килсен, вӑл чугун чашӑк тӗпне сӑмсипе пусать те унтан ӑшӑ шыв тухать. Ене чашӑк ҫинчен тутине илсенех шыв юхма чарӑнать. Пӑрусен ҫурчӗ те таса, ҫутӑ, ӑшӑ. Пирӗн колхозри пӑрусене республикӑри паллӑ стахановка К. Григорьева юлташ пӑхать. Вӑл ҫак ӗҫре нумай ҫул хушши ӗҫленине пула, унӑн опычӗ пысӑк. Вӑл пӑрусене лайӑх ҫитӗнтерет. Халиччен пирӗн колхозра пӑру вилни пулман.

Выльӑхсем валли шултӑра апатсем, тымар-ҫимӗҫ тата тырӑ та ҫителӗклӗ уйӑрса. ферма заведующийӗ Соловьев юлташ аллине акт тӑрӑх панӑ.

Пирӗн колхоз государствӑна выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем парса татнӑ. Эпир кӑҫалхине кӑна мар, килес ҫулшӑн та аш-какай, сӗт-ҫу, ҫӑм панӑ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 27 ҫул тултарнине, ҫапла, пирӗн колхоз паха ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илчӗ. Халӗ эпир колхоза кирлӗ фондсене уйӑратпӑр тата колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх тырпулпа тупӑш валеҫсе пама хатӗрленетпӗр.

П. МАЙКОВ.

«Красное Сормово» колхоз председателӗ.

Кашни гектартан 110 пӑт

КУСЛАВККА. «Динамо» колхоз кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫлесе ҫитерчӗ. Авӑн ҫапса пӗтернӗ хыҫҫӑн тырпул тухӑҫне ӳстерес тӗлӗшпе хӑш бригада мӗнле ӗҫленине тӗрӗслесе тухрӑмӑр. Кӑҫал пирӗн колхозра ултӑ бригада ӗҫлерӗ. Пурте вӗсем тырпул тухӑҫне ӳстерессишӗн, тырпула кӗске вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртессишӗн пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ.

Ӑмӑртура Анна Агеева ертсе пыракан III-мӗш бригада мала тухрӗ. Унӑн бригади кашни гектартан 110 пӑт тӗштырӑ туса илнӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ Мосолов ертсе пыракан бригада кашни гектартан вӑтам шутпа 103 пӑт туса илнӗ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн ӑмӑрту уйрӑм колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче те анлӑн сарӑлса пычӗ. Фронтовик арӑмӗ И. Смирнова тырпула пухса кӗртес ӗҫре кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлерӗ. Вӑл 9 уйӑх хушшинче 540 ӗҫкунӗ турӗ. Е. Сорокина тата Анна Смирнова колхозницӑсем 370-шер ӗҫкунӗ турӗҫ.

Халӗ колхозра Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклада вӗренетпӗр. Ҫулпуҫ сӑмахӗсемпе хавасланнӑ колхозниксем государство умӗнчи парӑмсене пӗтӗмпех парса татрӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 2000 пӑт ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫ леҫсе пачӗҫ. **В. МОСОЛОВ.**

РИГАРИ АЧА УЧРЕЖДЕНИЙӖСЕМ

Латви столицинче 6 ача ҫуртӗ уҫнӑ. Вӗсенче тӑлӑха юлнӑ ачасем вӗренсе ӳсеҫҫӗ. Вӗсен ашшӗсем гитлерла захватчиксемпе ҫапӑҫса вилнӗ е вӗсене Германие хӑваласа кайнӑ. Государство ҫав ача ҫурчӗсенче пурӑнакан ачасене мӗн кирлине пурне те панӑ. Ҫав учрежденисемсӗр пуҫне, Рига хулинче тата ача садӗсем нумай уҫнӑ. Вӗсене ачасем ашшӗсем предприятисенче е хула хуҫалӑхне юсанӑ ҫӗрте ӗҫленӗ вӑхӑтра ҫӳреҫҫӗ. (ТАСС).

Ҫӗнтерӳ праҫникӗ

Вӗсем Канаш станцинче поезд кӗтсе тӑраҫҫӗ.

— Ӑҫта каймалла-ха сирӗн? — ыйтрӗ пӗри.

— «Путиловкӑна».

— Пит аван ӗҫлекен колхоз, теҫҫӗ. Чӑнах та ҫаплах-ши?

— Теҫҫӗ мар, чӑнах. Ӗҫ майӗпе эпӗ унта икӗ хут пултӑм, халӗ акӑ татах каятӑп. Колхоз лайӑх ӗҫлет. Ӗҫкунне виҫӗ кило лекет.

— Да-а... Ырӑ ят...? Кам-ха унта председателӗ?

— Тазенов, Александр Трофимович. Виҫӗ ҫул ӗҫлет ӗнтӗ. Хӑй тавра лайӑх актив пухнӑ, ӗҫсене аван йӗркелет. Пӗр сӑмахпа каласан, председателӗ те маттур, колхозӗ те маттур! Халь колхозӗнче пурте праҫнике хатӗрленеҫҫӗ ӗнтӗ...

— Апла эсӗ праҫнике лекетӗн?..

— Ҫапла. Шӑп праҫнике лекетӗп...

* * *

Праҫник Сталин юлташ докладӗ хыҫҫӑн пуҫланчӗ. Ҫулпуҫ сӑмахӗсене «Путиловка» колхозникӗсемпе колхозницисем тулли кӑмӑлпа итлерӗҫ.

— Эпир ӗҫсене пуҫтартӑмӑр. — терӗ вӗсем. — Фронт умӗнче те, Сталин юлташ умӗнче те эпир хамӑра-хамӑр таса шухӑшлӑ кӑмӑллӑ туятпӑр. Уйсене, пахчасене ывӑнма пӗлмесӗр, лайӑх пӑхрӑмӑр, тырпул, пахча-ҫимӗҫ нумай пухса илтӗмӗр. Государство панӑ заданисене вӑхӑтра, чылайӗшне срокченех тултартӑмӑр. Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 80 центнер ытла тырӑ, 80 центнер ҫӗрулми патӑмӑр. 1945 ҫулшӑн аванс шучӗпе 40 центнер тырӑ, 30 центнер аш-какай леҫнӗ. Кӗске вӑхӑт хушшинче Хӗрлӗ Ҫар воинӗсене парне—14 центнер тырӑ, 500 ҫӑмарта, 110 килограмм какай панӑ.

Ку мухтанса каланӑ сӑмахсем мар. Ку ӗҫе тума пӗлекен, тӑван ҫӗршыва юратса ӗҫленӗ ҫынсен сӑмахӗсем.

— Ман ывӑл фронтран икӗ ҫыру килчӗ. Эпӗ хам ҫемьери хуйӑх ҫинчен мар, ирсӗр тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтересси ҫинчен шухӑшлатӑп. Мана фронт валли пӗр 5 пӑт улма пама сӗнчӗҫ, эпӗ 25 пӑт патӑм. Сталин юлташ совет патриотизмӗн вӑйӗ халӑх хӑйӗн тӑван Совет ҫӗршывне пӗтӗм чун-чӗререн парӑнса ӗҫлени ҫинче никӗсленсе тӑрать, терӗ, тылра ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленӗ ҫынсене мухтарӗ.

Малтанхи куркана пур бригадӑсенче те Сталин юлташ ячӗпе ӗҫрӗҫ.

Сӗтелсем ҫинче тӗрлӗрен апат-ҫимӗҫсем, кӑрчама, эрех...

Колхоз председателӗ Тазенов , юлташ Октябрьти Революци пулни 27 ҫул тултарнипе саламларӗ, кӗскен Сталин юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче мӗн калани ҫинчен пӗлтерчӗ.

«Путиловка» уяв турӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем Хӗрлӗ Ҫаршӑн курка ҫӗклерӗҫ, совет влаҫӗшӗн, колхоз йӗркишӗн, стариксемшӗн, хӗрарӑмсемшӗн, пысӑккисем пек ӗҫлеме пӗлнӗ ачасемшӗн курка ҫӗклерӗҫ. Фронтовиксемшӗн курка ҫӗклерӗҫ, тӑшманпа ҫапӑҫса вилнӗ воинсене асӑнчӗҫ.

— Асран ан ҫухалччӑр вӗсем... Пирӗн тӑвансем, мӑшӑрсем, пиччесем... Вӗсен ячӗсем ҫӑлтӑр пек ҫуталса тӑччӑр... Пӗр вӑхӑт шӑп пулчӗ. Кашни хӑйӗнни ҫинчен шухӑшларӗ. Мӑшӑрпе ывӑлне, ашшӑне аса илчӗ. Хӗрарӑмсем тутӑр вӗҫӗсене куҫӗсем патне илсе пычӗҫ, ачасем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ, стариксем пуҫӗсене усрӗҫ...

— Ну, юрӗ-ҫке, ҫитӗ, — терӗ счетовод Петр Тимофеевич Тимофеев, вӑрҫӑран аманса килнӗскер, хӑйне панӑ ӗҫе тӗплӗн туса пыракан ҫскер.—Атьӑр-ха, ҫӗклер курка тӑван ҫӗршывшӑн!

Вӑхӑт иртсе пычӗ. Пӳртсенче те урамсенче те юрӑсем, купӑс сассисем янраса тӑчӗҫ. Праҫник тӑвакансем нумай япала ҫинчен калаҫрӗҫ, шухӑшларӗҫ, асӑнчӗҫ. Кӑмӑлсӑрри пулмарӗ—тул ҫуталаспа килӗсене саланчӗҫ, праҫник чыслӑн иртрӗ.

— Ҫапла вӑл... аван ӗҫлесен,—терӗҫ колхозниксем. — праҫник те аван, сыпӑ ҫулла кӑмӑллӑ иртет.

В. РЗАЙ.

ПӖР ЯЛ ҪАМРӐКӖСЕМ

Урнӑ нимӗҫсем пирӗн ҫӗршыв чиккине пӑснӑ, вӑрҫӑ пуҫланнӑ. Хӑшӗсем ҫав кунах, теприсем эрнерен, уйӑхран фронта, ҫӗршыва сыхлама кайнӑ. Фронта кайиччен нимӗнпех те паллӑ пулманскерсем, ҫапӑҫу хирӗнче ҫӗршыв паттӑрӗсем, унӑн мухтавлӑ воинӗсем пулса тӑнӑ.

Тӑшман войскисем, пур-ҫук вӑйне пухса, Хӗвелтухӑҫнелле, Мускав патнелле тапаҫланнӑ. Чечекленсе ӳссе пыракан нумай хуласемпе ялсене этемлӗх историйӗнче пулман тискерлӗхпе тустарнӑ. Ҫак вӑхӑтра подполковник Филипп Трофимов пирвайхи хут боевой приказ илет. Вӑл боевой приказа чыслӑн пурнӑҫа кӗртет. Ҫав ҫапӑҫусенчи паттӑрла ӗҫсемшӗн совет офицерне Трофимова Правительство Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланӑ. Халӗ бригада командирӗ, гварди подполковникӗ Трофимов тӑшман территорийӗ ҫинче ҫапӑҫать.

1942 ҫулхи августӑн шӑрӑх кунӗсенче тӑшман, Мускав ҫулне уҫас тесе, Сухиничи тата Козельск хулисем ҫине наступлени тунӑ. Анчах гварди чаҫӗсем тӑшман ҫулне пӳлсе лартнӑ. Ҫак ҫапӑҫусенче рядовой автоматчик Михаил Петров паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартса ҫапӑҫнӑ, унӑн автоматӗ 18 нимӗҫе «леш тӗнчене» ӑсатнӑ. Ҫак ҫапӑҫусенчех автоматчиксен ротин политрукӗ стройран тухнӑ. Унӑн ӗҫӗсене туса пыма Петров хӑй тытӑннӑ, ҫапла вара вӑл автоматчиксен ротин политрукӗ пулса тӑнӑ. Чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Правительство ӑна Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе наградӑланӑ.

1943 ҫулхи декабрӗн шартлама сивисенче Петров тӑракан гварди чаҫӗн Невель хулинчен кӑнтӑртарахра нимӗҫсен ҫирӗп оборонине ҫӗмӗрмелле пулнӑ. Ҫак ӗҫри тата Городок хулине илнӗ чухнехи паттӑрлӑхшӑн Петрова Правительство иккӗмӗш орденпа — Отечественнӑй вӑрҫӑн иккӗмӗш степень орденӗпе наградӑланӑ. Халӗ гварди аслӑ лейтенанчӗ Петров комсомолӑн полкри бюровӗн ответлӑ секретарӗ пулса ӗҫлет, тӑшман территорийӗ ҫинче ҫапӑҫать.

1942 ҫулхи август уйӑхӗнче Хӗвеланӑҫпе Калинински фронтсенчи войскӑсем, наступленилле вӑрҫӑ туса пырса, малалла куҫнӑ, хула хыҫҫӑн хула, ял хыҫҫӑн ял илнӗ. Вӗсем хушшинче штурмовой отряд командирӗ Никита Степанов та хӑйӗн отрячӗпе тӑшмана хирӗҫ хаяр ҫапӑҫу туса пынӑ. Хавхалантарнӑ вӑл боецсене ҫапӑҫма, вӗрентнӗ вӗсене ҫапӑҫма, вӑйӗпе те, пӗлӳлӗхӗпе те пулӑшнӑ вӗсене ҫапӑҫура. Хӑй пӗр ҫапӑҫурах икӗ хут аманнӑ пулин те, геройла ҫапӑҫса 16 нимӗҫе вӗлернӗ. Унӑн кӑкрине Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ илемлетет.

Сталинград хӑрушлӑх умӗнче тӑнӑ. Тӑшманӑн сӗмсӗр войскисем хулана илесшӗн пулнӑ. Ҫавӑнта ҫапӑҫусенче 19 ҫулхи коммунист, аслӑ сержант Евгений Иванов хӑюллӑн ҫапӑҫнӑ, пирӗн ҫарсем тӑшманӑн 22 дивизине ҫавӑрса илсе пӗтернӗ чухнехи ҫапӑҫура пулнӑ.

Хӗрлӗ Ҫара кайиччен колхозӑн паллӑ конюхӗ пулнӑ Григорий Павлов та аслӑ Совет ҫӗршывӗшӗн пыракан ҫӗнтерӳллӗ ҫапӑҫусенче геройла ҫапӑҫать. Чылай хуласемпе ялсене нимӗҫсенчен тасатнӑ ҫӗрте пулнӑ вӑл, командованин пур заданийӗсене те вӑхӑтра та тӗрӗс пурнӑҫланӑ. Халӗ унӑн кӑкри ҫинче Хӗрлӗ Ялав орденӗ, «За отвагу» тата «За оборону Сталинграда» медальсем ҫуталаҫҫӗ.

Ҫапла ҫапӑҫаҫҫӗ Аслӑ Совет ҫӗршывӗшӗн пыракан ҫӗнтерӳллӗ ҫапӑҫусенче Етӗрне районӗнчи Кӑташ ял паттӑрӗсем. Кӑташсем хӑйсен ывӑлӗсемпе мухтанма тивӗҫлӗ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑра вӗсен вунултӑ ывӑлӗ Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ОФИЦЕР ПАТТӐРЛӐХӖ

— Ывӑлӑм, тӑванӑм! Нимӗҫсем килеҫҫӗ, —кӑшкӑрса янӑ пӗр карчӑк хӑраса ӳкнипе, — ӑҫта пытарам-ши сана?

— Мана пытарма кирлӗ мар, аннем!—пӑлханмасӑр каланӑ ҫар тумтирӗ тӑхӑннӑ ҫамрӑк ҫын. — Эпӗ вӗсен аллине чӗррӗн парӑнмастӑп!

Нимӗҫсем пурте кӗпӗрленсе кӗнӗ.

— Русс! —кӑшкӑрнӑ вӗсем кӗрсенех.

Анчах Хӗрлӗ Ҫар воинӗ вӗсене шутласа тӑма вӑхӑт паман. Гранатӑсене ҫӳлелле ҫӗкленӗ те алӑк патнелле утма пуҫланӑ. Нимӗҫсем каялла сирӗлнӗ. Пирӗн офицер пӳртрен чупса тухсан кӑна вӗсем харӑссӑн кӑшкӑрса янӑ, татти-сыппи сӗр пеме тытӑннӑ. Анчах кая пулнӑ, вӗсем лаша ури сассине кӑна илтсе юлнӑ.

Ҫакӑ вӑл старши лейтенант Михаил Егоров пулнӑ. Егоров юлташ темӗнле хӑрушӑ вырӑнсенче те пулнӑ. Темиҫе хутчен нимӗҫсен тылне кайса сведенисем илсе килнӗ, тӑшманӑн оборона системине сӑнанӑ, чӗлхе тытма ҫӳренӗ.

Пӗррехинче Егоров юлташ хӑйӗн боецӗсемпе пӗрле нимӗҫсен тылне 15 ҫухрӑма ҫити кӗрсе кайнӑ. Вӗсен продуктсем те пӗтсе ҫитнӗ. 6-мӗш кунӗнче Егоров хӑйӗн ушкӑнӗпе нимӗҫсем ҫине тапӑннӑ. Хаяр тытӑҫу пуҫланнӑ. Нимӗҫ офицерӗ Егорова виҫӗ хут пистолетран пенӗ, анчах пульӑсем пуҫ ҫийӗн выҫӑ шӑнасем пек шӑхӑрашӑхӑра иртсе кайнӑ. Егоров офицер ҫине сиксе ӳкнӗ те ӑна хӑйӗн пуҫӗ урлӑ йӑтса пенӗ, офицерӑн пистолечӗ ывтӑнса кайнӑ. Офицер арлан пек вӑрҫнӑ, кинжал туртса кӑларнӑ, анчах Егоров унӑн аллинчи кинжалне те ҫапса ывтӑнтарса янӑ, ӑна сывлӑш ҫавӑрма памасӑр пӗтерсе тӑкнӑ.

Ку ҫапӑҫу Кавказ тӑвӗсене сыхланӑ чухне пулнӑ. Унтанпа Михаил Егоров нимӗҫ фашисчӗсене хӑваласа Кавказран пуҫласа Карпат тӑвӗсем патне ҫитнӗ. Вӑл унта та тӑван ҫӗршывӑн тивӗҫне ҫӳлте тытса пырать.

Г. РОМАНОВ.

Хӗвеланӑҫ Европӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, ноябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ ноябрӗн 21-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Голландире союзниксен ҫарӗсем Венло хулинчен хӗвеланӑҫнелле чылай малалла кайнӑ. Кунти вырӑна тӑшман минӑсем нумай лартса тултарнӑ, анчах та вӑйлӑ хирӗҫ тӑман. Мейель хулинчен ҫурҫӗртерехре союзниксен ҫарӗсем Хелленавеен хули таврашне тата Елена каналӗ ҫине пырса тухнӑ.

Германире Гейленкирхен хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман танксем пулӑшнипе контратака тунӑ. Союзниксем нимӗҫсен контратакине сирсе янӑ. Ку хуларан хӗвелтухӑҫнерехре Гереонсвейлер хули патӗнче тата Фрейальденгофен хулинче тӑшман союзниксен ҫарӗсене хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫать. Союзниксен ҫарӗсем Шлейден хулинчен иртсе кайнӑ. Аахен хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре самаях малалла кайнӑ. Союзниксен ҫарӗсем халӗ тӑшманпа Эшвейлер хулин хӗвеланӑҫ тата кӑнтӑр хӗррисенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Францире союзниксен ҫарӗсем Мец хулине виҫӗ енчен кӗрсе кайнӑ. Тӑшман унта хулан ҫурҫӗр пайӗнчи икӗ пунктра хытӑ хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫнӑ. Мец хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксем Лелен (Леллинген) хулине кӗнӗ. Дьез хулинчен 6 миля ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Эншвиль (Иншвейлер) хулинче тӑраҫҫӗ. Союзниксен ҫарӗсем 6 миля ытла малалла кайнӑ, тӑшман вӑйлах хирӗҫ тӑман, халӗ союзниксем Сарребур хули патне сывхарса ҫитнӗ. Бламон хули районӗнче 20 яла ытла ирӗке кӑларнӑ.

Союзниксен ҫарӗсем Бельфор хули патӗнчи проход витӗр тухса кайнӑ, Рейн шывӗ ҫине унӑн тури тӑрӑхӗнче тухнӑ. Алькирк хулине тата ытти темиҫе хулана ирӗке кӑларнӑ.

Ҫанталӑк начар тӑнӑ пирки авиаци вӑйлах ҫапӑҫайман.

ЛОНДОН, ноябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ ноябрӗн 21-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Италире Равенны хулинчен кӑнтӑртарахра 8-мӗш арми чаҫӗсем икӗ вырӑнта ӑнӑҫлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн тӑшмана вӑл йышӑнса тӑнӑ позицисенчен хӑваласа кӑларнӑ, тыткӑна илнисем пур. Форли хулинчен хӗвеланӑҫнерехре Англи ҫарӗсем хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ, темиҫе ял тытса илнӗ. 5-мӗш арми секторӗнче тӑшманӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Тӑшмана ҫухатусем кӳнӗ.

Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс авиацийӗ 1.800 вӗҫеве яхӑн тунӑ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ ноябрӗн 22-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Голландире Хелепавеен хулинӗ ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн союзниксен ҫарӗсем ҫав хуларан 4 миля малалла хӗвелтухӑҫнелле кайнӑ. Ку хуларан кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре те Маасбрее хули патӗнче союзниксен ҫарӗсем малалла куҫса пынӑ, халӗ вӗсем Венло хулине ҫитесси 4 миля кӑна юлнӑ.

Германире Гейленкирхен хули секторӗнче ҫав-ҫавах хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Союзниксен ҫарӗсем Эшвейлер хулине кӗрсе кайнӑ. Штольберг хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата Гюртчен вӑрманӗн ҫурҫӗр пайӗнче тӑшман хирӗҫ тӑрать. Грессених хулинчен икӗ миля ҫурҫӗр хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Гейстерн хулине туртса илнӗ. Союзниксен ҫарӗсен ытти отрячӗсем, ҫав хуларан иртсе кайса, малалла куҫса пыраҫҫӗ.

Мец хулинче тӑшман Соси урамӗнче хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫать.

Мец хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем Фалькенберг хулинчен ҫурҫӗртерехре ҫитӗнӳсем тунӑ. Унта ҫав хуларан 10 миля кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Эллимер хулине ирӗке кӑларнӑ, унтан кӑштах кӑнтӑртарахра союзниксем Торшвиль тата Эншвиль (Эншвейлер) хулисене туртса илнӗ. Сарребур хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен танкӗсемпе пехоти анлӑ фронтпа 8 миля таран малалла кайнӑ. Унта тӑшман вӑйлӑ хирӗҫ тӑман. Вогез тӑвӗсем урлӑ выртакан Саверн проходӗнчи участокра союзниксен ҫарӗсем нимӗҫсен оборонине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Васкаса каялла чакакан тӑшман нумай хӗҫпӑшал пӑрахса хӑварнӑ. Наступлени туса пыракан союзниксем 100 тӑваткӑл миля ытла вырӑнта нумай яла ирӗке кӑларнӑ.

Союзниксен авиацийӗ наступлени туса пыракан ҫарсене пулӑшса ҫапӑҫнӑ, тӑшманӑн Ҫурҫӗр тата Хӗвелтухӑҫ Голландипе Хӗвеланӑҫ Германири вӑрҫӑ объекчӗсене пыра-пыра ҫапнӑ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ ноябрӗн 22-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Форли хулинчен хӗвеланӑҫнерехре 8-мӗш армири Англи чаҫӗсем Кастильоне ятлӑ ҫирӗплетнӗ яла туртса илнӗ. Унтан хӗвеланӑҫнерехре 8-мӗш арми чаҫӗсем, тӑшман вӑйлӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Монте Фортинона ҫӗнӗрен тытса илнӗ, вара унтан пӗр миля малалла кайса, Монте Пиано ятлӑ пахӑ ҫӳллӗ вырӑна йышӑннӑ. Ку секторта йывӑр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. 5-мӗш армири Америка, Англи тата Инди чаҫӗсем татах тӑшманӑн темиҫе вӑйлӑ атакине сирсе янӑ.

Ноябрӗн 21-мӗшӗнче союзниксен авиацийӗ Югославипе Ҫурҫӗр Италире тӑшман ҫарӗсене тата унӑн ҫулӗсене пыра-пыра тапӑннӑ.

Союзниксен авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, ноябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: ноябрӗн 21-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле акӑлчансен «Москито» йышши 100 бомбардировщикӗ ытла Германин вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ. Ҫав бомбардировщиксенчен нумайӗшӗ 1.800 килограма яхӑн таякан бомбӑсем илсе кайнӑ.

Ганновер хулине тапӑннӑ, ун ҫине икӗ хут пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. «Ланкастер» йышши самолетсем Кобленц хули ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ноябрӗн 20-мӗшӗнче кӑнтӑрла иртсен Рурти вӑрҫӑ объекчӗсене атакӑланӑ.

Американецсен Европӑри сывлӑш-ҫар вӑйӗсен штабӗ ҫапла пӗлтернӗ: ноябрӗн 20-мӗшӗнче америка самолечӗсем Гельзенкирхен хулинчи синтетически горючи завочӗсене, ҫавӑн пекех тата Мюнстер хулинчи сортировка станцийӗсене тапӑннӑ.

Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: союзниксен Италири авиацийӗ ноябрӗн 20-мӗшӗнче нимӗҫсен Тури Силезири Блехгаммер хулинчи синтетически горючи завочӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ЛОНДОН, ноябрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: ноябрӗн 21-мӗшӗнче 1250 ытла «Вӗҫекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем, 110 истребитель ытла хӳтӗлесе пынипе, Гамбург, Гарбург тата Мерзебург хулисенчи нефть тасатакан заводсене, ҫавӑн пекех тата Германири ытти вӑрҫӑ объекчӗсене те тапӑннӑ.

ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНТӖНЧЕ «ФОЛЬКСШТУРМОВЕЦСЕМ» ТЫТКӐНА ЛЕКНӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Хӗвеланӑҫ фронтӗнче американецсен 3-мӗш армийӗн чаҫӗсем «фольксштурмовецсен» пӗр ушкӑнне тыткӑна илнӗ. Ҫав ҫынсем — 45—50 ҫула ҫитнӗскерсем. Фронта яриччен вӗсене хӗҫпӑшалпа мӗнле усӑ курмаллине 8 сехет хушши ҫеҫ вӗрентнӗ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХӐЛХАСӐР-ЧӖЛХЕСӖРСЕНЕ ТЕ ҪАРА ИЛЕҪҪӖ

ЛОНДОН, ноябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, французсен пӗрремӗш арми чаҫӗсем Бельфор хули районӗнче пӗр рота нимӗҫе тыткӑна илнӗ. Ҫав ротӑри нимӗҫсем пурте хӑлхасӑр-чӗлхесӗрскерсем пулнӑ. Вӗсене малтан ӗҫ батальонне мобилизациленӗ пулнӑ, кайран вара фронта янӑ.

БЕРЛИНРА ГИТЛЕРА ХИРӖҪ ҪЫРНА ЛИСТОВКӐСЕМ САЛАТНИ

СТОКГОЛЬМ, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Шведсен «Афтонбладет» ятлӑ хаҫачӗ ҫапла пӗлтерет: юлашки кунсенче Берлин хулинче ҫуртсем ҫумне листовкӑсем нумай ҫыпӑҫтарса тултарнӑ. Листовкӑсенче ҫапла ҫырнӑ: 1942 ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнче Сталинградра нимӗҫсен 6-мӗш армине пӗтерсе тӑкрӗҫ, ҫав ҫара Гитлер приказне пӑхӑннӑ пирки парнене кӳчӗҫ. Халӗ Гитлерпа унӑн палачӗсене пӗтерсе тӑкас ӗҫ пуҫланса каять, мӗншӗн тесен вӗсем пӗтӗм нимӗҫ халӑхне парнене кӳрессшӗн. Германи Сталинградра 6-мӗш арми пӗтнӗ пек пӗтмелле мар. Ҫавӑнпа та Гитлера вилӗм!»

НИМӖҪСЕН СТОКГОЛЬМРИ АВИАЦИ АТТАШИ ВЫРӐНТАН ТУХНӐ

СТОКГОЛЬМ, ноябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаҫат ҫапла пӗлтерет: нимӗҫсен Стокгольмри авиаци атташи Ридель капитан вырӑнтан тухнӑ та Германие кайма килӗшмен. Ридель капитан Германин Швецири 5-мӗш официальнӑй представителӗ, хӑйӗн полномочийӗсене пӑрахса, Германие каялла таврӑнма килӗшменскер пулса тӑрать.

ЛАПКӐ ОКЕАН ҪИНЧИ ВӐРҪӐ

ЛОНДОН, ноябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑ пӗлтернӗ тӑрӑх, ноябрӗн 15-мӗшӗнче Америка чаҫӗсем Мапий утравӗсем ҫине пырса аннӑ. Ҫак утравсем Ҫӗнӗ Гвинея утравӗн ҫурҫӗр ҫыранӗ патӗнчи Биак утравӗнчен 145 миля ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре ларҫҫӗ. Ҫав утравсем ҫинче Америка ҫарӗсене вӑйлӑ хирӗҫ тӑман, вӗсем вара ҫийӗнчех утрав ҫине шалалла кӗме тытӑннӑ.

Англин 5-мӗш дивизийӗн Ҫурҫӗр Бирмӑри Калемьо хули патнелле хӗвеланӑҫ енчен пыракан чаҫӗсем ҫурҫӗр енчен наступлени туса пыракан ҫарӗсемпе пӗрлешнӗ. халӗ вӗсем ҫав хуларан 6—8 мильӑра тӑраҫҫӗ.

ШВЕЦИ РИГСДАГӖН ЧЛЕНӖ ГЕРМАНИПЕ ДИПЛОМАТИЛЛӖ ҪЫХӐНУ ТЫТМА ПӐРАХМА ЫЙТАТЬ

ГЕТЕБОРГ, ноябрӗн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Ноябрӗн 20-мӗшӗнче Гетеборг хулинче митинг пулса иртнӗ. Митингра ригсдаг (Швеци парламенчӗ) членӗ Фредерик Стрем сӑмах тухса каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: Норвежецсемпе датчансем ирӗке тухасшӑн ҫапӑҫни Швеци халӑхӗн ӗҫӗ пулса тӑрать тесе йышӑнмалла. Малалла Стрем ҫапла каланӑ: Швеци ытти ҫӗршывсенче Германи интересӗсене сыхлама пӑрахмалла, Германипе дипломатиллӗ ҫыхӑну тытма пӑрахмалла. Митингри халӑх Стрем каланине хавасланса ырланӑ. Гетеборг хулинчи хаҫатсем Стрем калани ҫинчен тӗплӗн ҫырса кӑларнӑ. «Арбетар тиднинген» хаҫат Стрем каланине пысӑк заголовоксем парса кӑларнӑ. Вӑл Стрем сӑмахӗсене ҫакӑн пек заголовок панӑ: «Германипе дипломатиллӗ ҫыхӑнусем тытса тӑма пӑрахмалла», тенӗ.

ИРАНӐН ҪӖНӖ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУМА БАЯТА ХУШНӐ

ТЕГЕРАН, ноябрӗн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Паян каҫхине шах Баята (Сахом-Эс-Салтанене) йышӑннӑ. Вӑл ӑна ҫӗнӗ правительство тума хушнӑ.

Меджлисӑн уҫӑ ларӑвӗ ноябрӗн 23-мӗшӗнче пулмалла. Ҫав вӑхӑта ҫӗнӗ правительствӑна туса ӗлкӗрме пулать тесе шутлаҫҫӗ, вара ҫав правительствӑна меджлис ларӑвӗнче ҫирӗплетмелле.

КИТАЙРИ ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, ноябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Чунцинри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Китай ҫарӗсем Лючжоу хулинчен тухса кайнӑ. Лючжоу вӑл Гуанси провинцийӗнчи паха сывлӑш-ҫар бази пулса тӑрать, вӑл Гуйлин хулинчен 134 миля кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре ларать. Америка авиацийӗн летчикӗсемпе ытти ҫыннисем хуларан самолетсем ҫине ларса вӗҫсе тухнӑ. Оборудованине те турттарса кайнӑ.

ЧУНЦИН, ноябрӗн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Китай командованийӗ ҫапла пӗлтерет: Гуанси провинцийӗнчи фронтра наступлени тӑвакан Япони ҫарӗсемпе вӑйлӑ ҫапӑҫаҫҫӗ. Япони чаҫӗсем Гуйлин хулине кӗрсе кайнӑ, унта халь урамсенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

ноябрӗн 24, 25, 26-мӗшӗсенче

«А К Т Р И С А»

ятлӑ саслӑ, илемлӗ фильм кӑтартать.

Сеанссем ҫак вӑхӑтра пуҫланаҫҫӗ:

12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса иркхине 10 сехетрех ӗҫлеме тытӑнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04207 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 и. д. Тираж 16.900 экз.